К 84.89 (=Чув)
А90
Ч-40357

Светлана АСАМАТ

# Тĕлĕнтермĕш тĕлĕк



Национальная библиотека ЧР
4-040357

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока



ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

**Светлана АСАМАТ**

# ТĔЛĔНТЕРМĔШ ТĔЛĔК



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2006



ПРОВЕРЕНО
2016 ОКТ 2017

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Ч-40 357

# Тавçăруллă Кăтрак

## *Халап*

Пурăннă тет çĕр çинче Кăтрак ятлă Улăп. Ун тăванĕ-хурăнташĕ йышлă пулнă, ĕçченлĕхĕпе палăрса тăнă. Улăпсем пурăнмалли çурчĕсене пĕлĕте çити, тӳпене шăтарасла çӳллĕ купаланă.

Тӳпе хуçи — Аслати — виçĕ урхамах туртакан тăрантас çине ларса час-часах пĕлĕтсем хушшипе ярăнса çӳренĕ, таврара мĕн пулса иртнине курсаса тăнă. Çилпе ăмăртса вĕçтерекен урхамахсем Улăпăн çӳллĕ çурт тăррине тăтăшах ватса хăварнă. Кăтракăн ăна час-часах сапласа тăма тивнĕ.

Пĕррехинче ларать тет Кăтрак пӳрт тăрринче пурттипе те мăлатукĕпе тӳнклеттерсе. Ян! ян! аякка сарăлнă пуртăпа ĕçленĕ сасă. Аслати хăлхине те кĕнĕ. Вăл чăтайман, Кăтрак патне пырса тăнă.

— Мĕн шавлатăн, Кăтрак? — ыйтнă Аслати.

— Салам, Аслати. Эпĕ мар, ĕç шавĕ янрать.

— Миçе хут каларăм сана пӳртна кун пек çӳллĕ ан ту тесе — итлеместĕн. Ма тӳпене шăтаратăн? Çĕр çинче вырăн сахал-им?

— Мана вырăн çитет-ха. Сан урхамахусем темшĕн манăн пӳрт тăррипе чупса иртме юратаççĕ. Пăрăнарах çӳреме май çук-ши? Тӳпе вĕçĕ-хĕррисĕр вĕт... — хуравлать Кăтрак.

— Хам патшалăхра хам хуçа. Эсĕ мана ан вĕрент.

— Паллах, хуçа. Çиле хирĕç вĕçтерсе тухатăн та шурă пĕлĕте тапта-тапта ыраттаратăн, кăвакартса амантатăн — шеллеместĕн. Паян та эсĕ хура лашу-

сене кӳлнӗ, тимӗр тӑрантаса ларнӑ. Шурӑ лашусене кӳлнӗ ылтӑн тӑрантаспа ҫула тухма эсӗ кӗмӗл ҫи-пуҫ тумланатӑн. Ун пек чухне эсӗ лӑпкӑ. Ҫав кун тӳпе те янкӑр таса, ҫанталӑк та тӳлек. Паян санран асӑрханмалла, паян эсӗ кӑра.

— Тӗрӗс, куҫу витӗр курать. Сан кӑна-и, пӗлӗтсен те мана юрама пӗлес пулать.

— Аслати, каҫар ӗнтӗ, эпӗ пӳрт тӑррине сӑмах ҫапма хӑпарман ҫав, хӑвах куратӑн. Пуҫланӑ ӗҫе хӑвӑртрах, каҫ пуличчен, вӗҫлес килет. Ав канӑҫсӑр лашусем тулхӑрма пуҫларӗҫ, пӗр вырӑнта тапӑртатса тӑрса ывӑнчӗҫ пулӗ.

Ҫапла каланӑ та Кӑтрак, тарлӑ ҫамкине шӑлса илнӗ, Аслати ҫине йӑвашшӑн пӑхнӑ. Унтан пуҫ ҫӗклемесӗр пурттипе ӗҫлеме пуҫланӑ.

Мӑнаҫлӑ Аслати вӑрӑм сухалне сӑтӑркаласа илнӗ, ҫиллес куҫӗнчи вут-хӗмӗ Кӑтрак ҫине сирпӗннӗ: «Пӑх-ха эсӗ ӑна, епле хӑюллӑ! Шавлать те шавлать. Мана итлесшӗн те каласасшӑн та мар, хӑйӗннех тӑвать!..» — тарӑхса шутланӑ хӑй ӑшӗнче.

— Кӑтрак, эп сана пӗчӗклететӗп. Эсӗ Улӑп пек пысӑк мар, кӑткӑ пек пӗчӗк пулатӑн. Ун чухне манпа тавлашма пӑрахатӑн.

— Тавлашмастӑп-ҫке! Манӑн хирӗҫме те шухӑш ҫук. Ыйтрӑн та, хуравларӑм. Пуҫӑннӑ ӗҫе вӗҫлес пулать. Эсӗ мана ан кӳрен.

— Ытла та харсӑр Улӑп эсӗ. Асли хушнине итлемелле, эсӗ ман сӑмаха хӑлхана хывмастӑн, тӳпене янратса кирлӗ мар шӑв-шав кӑларатӑн. Ку мана пачах та килӗшмест.

Кӑтрак хирӗҫ нимӗн те чӗнмерӗ, шан! та шан! ҫапрӗ пӑтана. «Эй, шеремет пӑти, тем кутӑнла-

нать, пăх-халĕ, кукăрăлчĕ те ларчĕ, — каласрĕ вăл хăйпе хăй. — Те хăми нӳрĕ, те хам тӳрĕ лектерей-местĕп».

— Кăтрак! — тарăхсах кайнă Аслати. — Кăтрак! Мĕн илтмĕше перетĕн? Эпĕ асăрхаттарни сана пур пĕрех-им?

— Эсĕ çӳлтен лайăх куратăн, пирĕн, аялтисен, лайăх пурнăç тăвас тесен пуç çĕклемесĕр ĕçлес пулать.

Аслати ура çине тăнă, тимĕр туйине тăрантас тĕпне шăтарасла çапнă. Пĕтĕм тавра чĕтренсе илнĕ. Кăтрак чунĕ çӳçеннĕ, анчах та вăл çакна палăртман, пӳрт тăрринче тăрмашма чарăнман.

Ак тамаша! Мĕн амакĕ? Пĕрре çапать те мăлатукĕпе — виçĕ аршăн тăршшĕ пĕчĕкленет, виçĕ пăт чухлĕ начарланать. Тепре çапать — тата пĕчĕкленсе ларать.

Тин кăна вăйпиттискер самантрах хавшакланнипе мăлатукне те, пурттине те тытаймасть. Вĕсем çĕре ӳкеççĕ, пĕр нăрă шăлĕкне лапчăтса хураççĕ.

Тарăхнă Нăрă нăрла-нăрла ятлаçма пикенет:

— Кăтрак, мĕн туса хутăн, мур илесшĕ? Чутах пĕтеттĕм вĕт!..

Нăрă ятлаçать пулин те хăй çав-çавах Кăтрака шырать. Пурттипе мăлатукĕ, пăчки, пăти сапаланса выртаççĕ, хуçи курăнмасть.

— Хăй ăçта-ши вара? Пурттисемпе перкелешет, хăратасшăн-ши мана? Е тĕп тăвас тет-ши? — тарăхнă Нăрă, Кăтрак ĕç хатĕрĕсене тапа-тапа илнĕ.

Ăнсăртран пĕчĕкленсе ларнă Кăтрак çурт тăрринчен аран-аран анать. Пăхать те — хăй купаланă кил-çурт ăна пы-ысăк керменĕн курăнса каять. Мĕн

пулса иртнине ăнкарса илме пĕр кана çенĕк картлашки çинче шухăша кайса ларать.

«Чăнах та пĕчĕк пулса тăтăм-и вара? Аслати çилленни çитрĕ пулĕ, каланă сăмахне пурнăçларĕ пулĕ».

Унтан Кăтрак сасартăк чалт! сиксе тăрать те тӳпенелле пăхса Аслитие çапла калать:

— Э-эй, Аслати-и, эсĕ мана куратăн-и, илтетĕн-и? Çӳрес çулу такăр пултăр. Керменĕм халĕ пушанчĕ ĕнтĕ, ăна тĕппипех аркатма пултаратăн. Текех сана кансĕрлеместĕп.

Хирĕç хурав пулман.

Кăтрак сапаланса выртакан пурттине, мăлатукне, пăчкине, пăтисене пуç тайса: «Шел пулин те, халĕ сирĕнпе никам та усă кураймĕ ĕнтĕ... Каçарăр, сирĕн тутăхса-çĕрсе выртма тивет», — тенĕ. Хурлăхлă



куçӗнчен чун сывлӑмӗн шӑрçи — куççуль — татӑлса аннӑ. Кӗмӗл шӑрçа çӗре ӳкнӗ те ӳкнӗ.

Кӑтрак çӗнӗ пурнӑç тума çӗнӗ çӗрелле утнӑ...

Тӗлӗннӗ Нӑрӑ кусне чарса пӑрахнӑ, йӗкӗлтешсе илнӗ. «Çав кирлӗ-ха, çав кирлӗ. «Ай-уй-й! Кӑтрак-и эс, Кӑтрак мар-и?» — текелесе вӗткеленсе вӗçсе çӳренӗ.

Кӑтракӑн Нӑрӑпа сӑмахлама кӑмӑлӗ те, вӑхӑчӗ те çук. Унӑн хыпалана-хыпалана çӗнӗ пӗчӗк çурт лартма пусӑнмалла...

* * *

Аслати пӗтӗмпех курать, илтет. Нӑрӑ Кӑтракран тӑрӑхлани ӑна култарать. Нӑрра пӗчӗкрен пысӑк тусан мӗн пулӗ-ши? Аслати хӑйӗн шухӑшне чӑна хывать — Нӑрра пысӑклатать. Лешӗ самантрах Упа пулса тӑрать, хӑйӗнчен хӑй хӑраса каять.

— Ай-уй! Эпех пултӑм-ши ку? Мӗскерле ӑптӑр-каптӑр кӳптеке вара ку? Акӑ, хам куçпа хам куратӑп: ури хамӑн, сӑмси те хамӑн.

Те тӗлӗннипе, те савӑннипе малти урисемпе кӑкӑрне çапа-çапа питӗ хытӑ мӗкӗрсе ярать. «Ай-уй, сассӑм та улшӑннӑ иккен!..»

Хӑнӑхнӑ йӑлипе вӗçсе хӑпарма хӑтланать — вӗçеймест. Çурӑмне хыпалать, çаврӑнса пӑхать — çуначӗсем курӑнмаççӗ.

«Çунатсӑр... çунатсӑр тӑратса хӑварчӗç. Сывлӑшра ярӑнаттӑм, чечек çине ларса чуччу тӑваттӑм... Тепӗр тесен халӗ эпӗ Кӑтракран та пысӑкка! Тек никамран та хӑрамастӑп!»

Пусӗ çаврӑнса кайнипе Упа палтӑрт! тӳнсе каять. Ун айне пулнӑ хунавсем шатӑрт! хуçӑлаççӗ.

Мĕн тери пысăкчĕ вĕсем, хунавсемпе тĕмĕсем, халĕ ҫӳллех те мар иккен. Упа каҫăрăлса тăрать, курăк хушшинче кĕшĕлтетекен пĕчĕк Кăтрака урипе тĕртсе амантать. Кăтрак ыратнине тӳсет, ахлатса йынăшмасть, никама та чăрмантарас темест. Хутланса выртнă Кăтрака йывăҫĕ те, курăкĕ те хĕрхенет, имлĕ сĕткенĕпе сиплет.

Сывалнă Кăтрак татах чупать, чикеленсе каясла ĕҫлет. Хуҫăлса ӳкнĕ вĕтĕ туратсене пуҫтара-пуҫтара ҫурт купаласа лартать.

Вăйне ниҫта хума пĕлмесĕр каҫăхса кайнă Упа Кăтрак ҫуртне ишсе антарать — хăй шӳлĕкĕшĕн тавăрма шутланă кĕтĕк ĕмĕтне пурнăҫлать. Кăтрак аптраса тăмасть, ҫурта ҫĕнĕрен купалама пулăшу ыйтса ниме юрри янратса ярать:

Нимене, нимене,
Тăванăмсем, нимене.
Ҫĕнĕ кермен ҫĕклеме
Пурте килĕр нимене.

Пĕр-пĕрне пулăшма хавас тăванĕ-хурăнташĕ Кăтрак ҫуртне малтанхичен те чаплăрах ҫĕклесе лартать. Нимере тăрăшуллă пулнăшăн тав туса ҫĕнĕ пӳрт ĕҫкине пухăннă тус-тăванне тараватлă хуҫа тутлă кучченеҫпе хăналать. Малалла та килĕштерсе пурăнма ырлăх-сывлăх сунать. Тăванпа тăван ҫапла пулмалла та.

* * *

Аслати йăлтах курать. Хушăран вăл тăвăл ҫĕклет, ҫиҫĕм ҫиҫтерет, Кăтрак вăйне-чăтăмне тĕрĕслес тенĕн, тулли шыв каткисене ӳпĕнтере-ӳпĕнте-

ре çумăр тăкать. Çапла майпа Кăтрака хăратма шутлать.

Кăтрак питĕ сисĕмлĕ: тăвăл тухасса, çумăр çăвасса малтанах туять, хăвăртрах çуртне кĕрсе пытанать. Алăкне, кантăкне хупать. «Çумăрĕ çутăр-ха, ăна ӳсен-тăрансем те, чĕр чунсем те кĕтеççĕ. Çумăр хыççăн сывлăш та тасалать», — тесе шухăшла-шухăшла пӳртре кăштăртатать.

Çумăр шапăртатма чарăнсан алăкне уçиччен малтан кантăкран пăхать. Упа пырса сăтăр тăвасран шикленет.

Пĕр кунхине Упа йăраланса çитнĕ те, Кăтрак çулне пӳлсе хунă, вĕçкĕнленме, курнăçланма тапратнă.



— Кăтрак, эсĕ тек Улăп мар, пĕлетĕн-и? Эсĕ — кăткă.

— Кăткă тăк, кăткă, мĕнле чĕнес килет, çавăн пек чĕн.

— Асту, манпа ан тавлаш. Унсăрăн халь тесен халь çĕнĕ çуртна тапса сирпĕтетĕп.

— Эпĕ санпа нихăçан вăй виçмен. Татах таптас килет-и? Çавăн пек пуçтахланма намăс пулмалла та сана... Пĕрмаях ман тавра усал шухăшпа явăнса çӳретĕн.

— Эсĕ манран хăратăн иккен. Чăнах, хăратăн. Хăра манран, Кăтрак.

— Хăратăп-и, хăрамастăп-и, эсĕ мана кӳрентерни, пĕлетĕн-и, сана ман умра пĕчĕклетет.

— Мĕ-ĕн? Сан умра пĕчĕкленетĕп-и? Шутласа калаç. Эпĕ санран мĕн чухлĕ пысăк. Хаш! сывласа яратăп та пĕр çухрăма вĕçсе çапăнатăн вĕт, айван. Эсĕ — вĕтĕ, эсĕ — вăйсăр. Эсĕ мана нимĕн те тăваймастăн.

— Манăн хама пурăнма вăй çитет. Эсĕ манран пысăк, сан вăй пур, ку тĕрĕсех. Анчах та, каçар та, ăсупа эс пĕчĕк. Мĕншĕн тесен хăвăнтан пĕчĕкрех хисене кӳрентернипе мухтанатăн. Тĕрĕс мар тăватăн, Упа. Эпĕ сана кансĕрлеместĕп, айăпсăрах ан тив мана. Пуççăр ан пул, Упа, тăна илсем. Атя уттар хăв çулупа.

— Ман пуç хăй вырăнĕнчех ларать-çке. Акă куратăн-и? — тĕреклĕ малти урисемпе лăп-лăп çапса илет пуçне Упа. — Пуççăр мар.

— Ырă тăвакана тăнлă-пуçлă, усал тăвакана тăнсăр-пуççăр теççĕ. Пуçпа шутласа йĕркеллĕ пурăнас пулать, Упа.

Упа Кăтрака пĕр сăмах та калайман. Шанк! хытса кайнă, шухăшпа йывăрланнă пуçне енчен енне сулкаласа майĕпен хăйĕн килне уттарнă.

* * *

Пĕррехинче тискер тăвăл тухнă. Çил урса-уласа вĕрнĕ. Хӳтĕленме пултарайман йывăçсем ахлата-ахлата хуçăлса ӳкнĕ.

Шăтăкра чĕтресе выртакан Упа пуçне шухăш пырса кĕрет: «Кăтрак ăçта-ши, асар-писер çил-тăвăла епле чăтать-ши?»

Сиксе тăрать те Кăтрак çурчĕ еннелле ĕрĕхтерет. Тавах, çурчĕ вырăнтах. Упа тăп! чарăнать, лăш! сывласа ярать.

Çав самантра Кăтрак çурчĕпе юнашар ӳсекен йывăç шатăртатса илет. Кĕç-вĕç Кăтрак çурчĕ çине ӳкекен хуçăлнă йывăç вуллине Упа çийĕнчех айккинелле тĕртсе янă. Кăшт сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн ăшĕнче темĕнле ырă туйăм пĕчĕккĕн вăй илсе пынине туйса илнĕ.

«Ăнлантăм, тинех ăнлантăм сана, Кăтрак. Ырă ĕç тусан чун савăнать», — хăпартланса Кăтрак çурчĕ тавра тапăртатса çаврăннă Упа. Тулли кăмăлпа йăвине таврăннă та лăпланса мăшлата-мăшлата çывăрах кайнă.

* * *

Хĕл ларнă, тавралăх ыйха путнă. Шурă юр Упа йăвине хулăн сийпе витнĕ.

Сисĕнмесĕрех сивĕ кунсем иртнĕ, илемлĕ çуркунне çитнĕ. Тутлă ыйхинчен вăраннă Упа йăраланса ăшă шăтăкĕнчен тухнă.

Вăрман кашлать, хĕвел йăлтăртатать. Упа карăна-карăна мĕкĕрсе илет, унăн кампа та пулин каласас килет. Курах каять: çўлте, тўпере, пĕр хитре кайăк вăшлаттарать. Ун çинче Кăтрак ларса пырать. Кăтрак та Упана асăрхать, кайăкне йывăç çине ларма ыйтать.

— Салам, Упа. Чиперех хĕл каçрăн-и?

— Салам, Кăтрак. Чиперех пулмасăр!.. Ай-уй кайăк кўлсе катаччи чупма камран вĕрентĕн?

— Эпĕ васканине курса чĕвĕлти тусăм: «Хăпарса лар, çитмелли çĕре часах илсе çитеретĕп», — терĕ. Эпир унпа кўршĕ вăрманти тăван-хурăнташа çуркунне çитнĕ ятпа саламлама пуçтарăнса тухнă. Вĕçтерер-ха, сывă пул.

Кайăк чĕвлетсе илнĕ, Кăтрак Упана ал сулса тўпенелле çĕкленнĕ. Лешĕ вара — курăка, йывăçа, кайăка, хурт-кăпшанкăна сывлăх суннă. Шăнкăртаттарса юхакан шыв тĕкĕрĕ çинче хăйĕн сăнне курнă та, ăшшăн кулса илнĕ. Тяпписене чăмпăлтаттарса уçăлтарнă, пит-куçне çуса тасатнă Упа питĕ кăмăллă курăннă.

Вăрманти мĕнпур чĕр чунсем çуркунне çитнипе савăнса хăйсен йăвине, хăвăлне, шăтăкне шăлса тасатнă, юсанă, çĕнетнĕ.

Кăтрак та юрла-юрла ĕçленĕ, юратнă çуртне тултан та, шалтан та тирпейленĕ.

Анчах та пĕр кунхине шалкăм çумăр хытă çунă хыççăн Кăтрак çўрчĕ шўсе, пусăрăнса аннă. Черченкĕ чĕрипе çемçе чунне пăшăрханулла шухăш çавăрса илнĕ:

«Ытла та пĕчĕк çав эпĕ, ытла та пĕчĕк. Çăмăл мар мана пуç çине йăтăнса анакан йывăрлăхсене

çĕнтерсе пурăнма. Аслати хушнине итленĕ пулсан, ахăртнех, çакăн чухлĕ асап курман пулăттăм», — тенĕ те нӳрленнĕ куçне кĕпе çаннипе шăлса илнĕ, шăппăн-шăппăн юрласа янă:

Хурланас мар тесессĕн те
Хурланмалли тупăнать.
Ырă курма кансĕрлекен
Хуйхă-суйхă çулăхать.

Юман атте айĕпелен
Пуçа пĕксе иртетĕп.
Çăка анне çумне пырса
Çупăрласа илетĕп.

Улăхăттăм-улăхăттăм
Чăнкă-чăнкă ту тăрне,
Май килтерсе çавăрăттăм
Аслаттейĕн кăмăлне.

Чăнкă тăвĕ питĕ çӳллĕ,
Ай, чăн тӳпе çӳллĕрех.
Кăтрак чĕри ыратнийĕ
Аслатие пурпĕрех.

Вăрман та итленĕ çак юрра, самантлăха шăпланнă. Хĕвел те итленĕ çак юрра, пĕлĕт хыçне пытаннă.

Аслати те итленĕ çак юрра. Чĕри çемçелнипе ăшĕнче хĕрхенӳ туйăмĕ çуралнă:

«Кăтрака пысăкран пĕчĕк туни ăна самаях асаплантарчĕ пулсан та, усăллă пулчĕ. Виçерен тухса пуçтахланма юраманнине ăнланса илчĕ пулас. Таравтлăскер тем те тӳссе иртерчĕ — никампа та

ятлаçмарĕ. Никама усал тумасть, усал сунмасть, хăйне сăпайлă тытать, сăмахне те çыпăçуллă çавăрттарса калама пултарать. Ӳстерес ăна, вăй-хăват парас. Ырă курса савăнса пурăнтăр».

Çапла шухăшлать кăна — Кăтрак яштака та тĕреклĕ çан-çурăмлă, илĕртӳллĕ сăн-питлĕ çын пулса тăрать. Çав тери савăнса кайнипе такмакласа ташша ярать:

Ури хамăн мар-и ман,
Алли хамăн мар-и ман?
Ырă курса пурăнма
Тус-тăванăм çук-и ман?



Йывăçĕ-курăкĕ шăпăр-шăпăр алă çупать, хĕвелĕ ытарма çук шевлине сапать, тавралăх йăлтăртатса, çиççе тăрать.

* * *

...Çул хыççăн çул иртет. Кăтрак хăйĕн кайăк пек вĕçес, урхамах пек вирхĕнес ĕмĕтне пурнăçлать. Кăткăс машинăсем шутласа кăларать, вĕсемпе усă курса хăйĕн ĕç-пуçне çăмăллатать.

Çут çанталăкпа туслă пурăнать, унăн пуянлăхне чыслăн-хисеплĕн упраса тăрать. Йывăç-курăк лартса ӳстерет. Кайăксем валли ăшă вĕллесем туса çакать, апат хурса парать.

Кăтрак май килнĕ таран пурне те пулăшать. Аслатипе тек пĕрре те куçа-куçăн каласма тивмен пулсан та ăна яланах асра тытать. Пысăк е пĕчĕк ĕçе пуçăнас умĕн тӳпене тинкерет те Аслатирен килĕшӳпе сĕнӳ, пулăшу ыйтать.

Йывăр кунсем килсен хупăрласа илнĕ инкекрен хăтăлма çăлăнăç тархаслать. Лартса ӳстернĕ пахча çимĕçпе, çăкăр-тăварпа сăйласа хапăл тума хатĕррине пĕлтерет, хăтлă тĕпелне чĕнет. Аслати пулăшнипе пурнăç ăнса пырасса ĕненет.

Аслати Кăтрак ӳсĕмĕсене курса савăнать, пархатар парсах тăрать. Пĕлĕтсем хушшипе ярапланпа вĕçекен Кăтрака шухă урхамахĕсене чарса тăратсах çул парать.

Тавçăруллă Кăтрак ачисене, мăнукĕсене хăй Улăп пулнă чухнехи асамлă вырăнсене, капмар та тĕлĕнмелле капăр керменсене илсе кайса кăтартать. Çамрăксене çуммăн тăратса ĕçе вĕрентет. Çĕре юратса ака-суха тăвать, çăл куççене юшкăнран тасатать.

Вăл пурăнакан ял-хула урамĕсем сарлака та таса, капашне пĕлсе çĕкленĕ çурчĕсем хитре.

Кăтрак шурă тум тăхăнма юрататъ, савнă мăшăрĕ — хăй аллипе тĕрленĕ, кĕмĕл тенкĕпе эрешленĕ çи-пуç кăмăллать.

Пултаруллă Кăтрак çамрăксене маттур, патвар, ырă кăмăллă, ĕçчен, тавçăруллă пулма вĕрентет, сипет курччăр тет. Ун чухне Аслати пулăшма пăрахмасть.

Апла пулсан Кăтрак таврашĕ-хурăнташĕ нихăçан та пĕтмĕ, ӳссех пырĕ, яланах лайăх пурăнĕ. Сапăррăн курăнса тăракан малашлăха талпăннă. Умри тумхахсене пăхмасăр малалла утать Кăтрак йăхĕ-ăрачĕ, çав çул вĕçĕ-хĕррисĕр вăрăм, çутă та уçă.

# ЧӖКЕҪ ЙӐВИ

*Чӑн пулни*

## 1

Пӗчӗккӗ чухне каяттӑм
Улӑха та вӑрмана.
Юмана — юман ҫинчен,
Ҫӑкана — ҫӑка ҫинчен,

Чечеке — чечек ҫинчен,
Юрӑ юрласа параттӑм —
Чун саван тавралӑха
Пӗчӗкҫӗ парне тӑваттӑм.

Пуҫӑм ҫаврӑнса каятчӗ,
Ӗмӗт — тӳпене туртатчӗ.
Кайӑкӑн вӗҫес килетчӗ,
Кайӑкӑн юрлас килетчӗ.

Ҫулҫӑсем — шӑпӑртатса,
Чечексем — шӑнкӑртатса
Манпала пӗрле юрланӑн
Илтӗнетчӗ хӑлхара.

Сарӑ кайӑк юррине,
Шӑпчӑк шӑрантарнине
Ӗнтрӗкпе вӑрман хӗрне
Тӑнлама тухса тӑраттӑм:

«Шӑнкӑрч ҫунатне ҫапса
Ташша ярса такмаклать.
Вӑрман кайӑкӗ мӗн-ма-ши
Вӑрттӑн, пытанса юрлать?

Ч-40357



Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Шăпчăк çунатти çинче
Пӳрне çук-ши? Унсăрăн —
Шăхличе мĕнпе пусать-ха,
Еплерех шăхăрттарать-ха?

Сарă кайăк турат çинче
Саркаланса ларать-ши,
Селĕм сăвви-кĕввисенче
Мĕскер çинчен калать-ши?»

## 2

Пирĕн пӳрт çамки çинче
Пĕр чĕкеç çемйи пурнатчĕ,
Çулсерен йăва тăватчĕ,
Ик-виç чĕпĕ кăларатчĕ.

Çепĕççĕн чĕвĕлтететчĕç
Тем çинчен пĕр-пĕринпе.
Тем пĕлсе пĕкĕлтететтĕм
Вĕсемпе мĕн çăвĕпе.

Пĕр çулхине кӳршĕ ачи,
Илле пиччен Кенати,
Вĕсене хытах хăратнă,
Чулпала персе шуйхатнă.

Пӳрт умĕнчи чие çырли
Пахчи урлă пере-пере
Йăвине тĕл тивеймен,
Çĕмĕрме ĕлкĕреймен.

Тарăхрăм, чулпах тĕллерĕм,
Çамкинчен тӳрех лектертĕм.

Чулĕ пысăках та марччĕ,
Лекрĕ те-ха, юн кăларчĕ.

Сиксе тухрĕç урама
Юна-юна ятлама
Марье инке — туяпа,
Илле пичче — пушăпа:

— Турттарса çатлаттарап —
Лайăхах ыраттарап!
Шаплаттарнă! — çамкаран,
Куçĕ аманас пулсан?!.

Йĕрес мар, хӳтĕленес,
Ак çапларах евитлес:
— Чĕвĕл чĕкеç йăвине
Тĕкĕнме, тивме хушман.

Вут тухать тет ăнсăртран.
Ак пушар тухас пулсан?..
Мĕншĕн эсир ачуна
Çакăн çинчен каламан?

Юрать пирĕн чӳрече
Кантăкĕсем ванайман.
Чанкăртатса ӳкнĕ пулсан?
Атте-анне ĕçрен килсен
Хăвăрăн кантăксене
Панă пулăттăр пире.

Чĕкеçсем вĕçсе çӳрерĕç
Пирĕн çийĕн вĕркешсе,
Ăнланаççĕ мар-ши терĕм
Кайăксем çын чĕлхине?..

Ах, шеллерӗм Генӑна,
Ашшӗ-амӑш хӗнесрен
Питӗ хытӑ хӑраса
Ӳле-ӳле макӑрса,
Вӑрӑм кӗпе ҫаннипе
Сӑмсине шӑла-шӑла
Вирхӗнтерчӗ ҫырмана.

Хӗл ларсан, чӗкеҫ йӑви
Татӑлса ҫӗре ӳксен,
Хӑйӗн аллипе тытса
Курас килнӗ йӑвана
Кайса патӑм Генӑна...

Ҫуркунне ҫитсен чӗкеҫ
Пӳрт умне мар, пӳрт хыҫне
Турӗ хӑйӗн йӑвине.
Ҫав тери савӑннипе
Сивӗнменшӗн тав туса
Ывӑс ҫине хурса патӑм
Тулӑ кӗрпи, вир кӗрпи,
Вӗҫсе ан та, лар та ҫи...
Ҫук, чӗкеҫ ҫӗре лармарӗ,
Хӑналас тени пулмарӗ.

### 3

Ӗмӗтпе ҫунатланса
Чӑн та, тӗлӗкре вӗҫеттӗм.
Талпӑнса чупса каяттӑм,
Алсене сарса ярса
Авӑсаттӑм-авӑсаттӑм...

Ҫӗкленеттӗм-ҫӗкленеттӗм
Пӗлӗтпе тӗл пуличчен,

Тĕлĕнеттĕм-тĕлĕнеттĕм
Пĕлĕтпе туслашнинчен...

Кайăк хăйĕн чĕппине
Вĕçтерме вĕрентнĕ евĕр,
Шур çунатлă çăмăл пĕлĕт
Çуммăн ярăнса пыратчĕ.
Уçăлатчĕç тинĕссем,
Чул тусем, юхан шывсем,
Пуш хирсем, çеçен хирсем...

Пысăклантăм, çитсе куртăм,
Куçа-куçăн сывлăх сунтăм
Тĕлĕкре тĕлленнине:
Аякри çĕршывсене,
Шукăль çурт-керменсене,
Ял-хула çыннисене —
Çĕр-аннемĕр илемне...



# ТĔЛĔНТЕРМĔШ ТĔЛĔК

Янкăр кăвак тӳпере
Янкăр кĕмĕл чечексем.
Янкăр таса чĕремре
Янкăр çутă шухăшсем.

Янкăр уçă кăмăлăм
Янкăр шухăш çуратать.
Янкăр уçă уçлăха
Янкăр ĕмĕт ăнтăлать.

Янкăс кăмăл еккипе
Сарă тĕлĕк куратăп:
Саркун патша çĕршывĕпе
Саркаланса утатăп.

Анлă Атăлпа Сĕве
Хушшине хутланă пек,
Пĕрре Тĕкĕр[1], тепре Йăхрат[2]
Шывĕсемпе çăвнатăп.

Ур, Лакаш, Ширпул, Ниппур,
Киш хули[3], Эрех[4] хули.
Шумерсемпе аккадсем —
Хура çӳçлĕ этемсем.

---

[1] Тĕкĕр — Тигр шывĕ.

[2] Йăхрат — Евфрат шывĕ.

[3] Ур, Лакаш, Ширпул, Ниппур, Киш — Авалхи Месопотами (Двуречье) çĕрĕ çинче пурăннă шумер халăхĕн хула ячĕсем.

[4] Эрех — Шумер патшалăхĕнчи хула, унта халăх библиотеки пулнă.

Сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă,
Яштак пӳллисем те пур.
Пĕр чĕлхепе пуплеççĕ,
Сывлăх сунса иртеççĕ.

* * *

Аккад[1] хулин керменне
Сар алăкран кĕретĕп,
Саркун[2] патша умĕнче
Эп пуçăма пĕкетĕп.

Хапăл туса, ал тытса
Кĕрекене лартрĕç те
Какай шӳрпи çитерчĕç,
Сăра, симпыл ĕçтерчĕç.

Шăпăрпала параппан
Ташă кĕвви каларĕç,
Кĕсле, купăс çеммипе
Шеп юрăсем шăранчĕç.

Тав куркине çĕклесе
Хăна юрри юрларăм,
Ал-урана хуçкаласа,
Авкаланса ташларăм.

Йĕтĕн кĕпе аркисем
Енчен-енне вăркăшрĕ,

[1] Аккад — Саркун патшалăхĕн тĕп хули.

[2] Саркун — шумерсемпе аккадсен пĕчĕк хула-патшалăхĕсене пĕрлештерсе пысăк та мăнаçлă Çĕршыв тунă пăхаттир.

Умлă-хыçлă саппун тĕрри,
Шăрçи-тенки йăлкăшрĕ.

Саркун патша-аслаттей
Ăш сăмахпа сăйларĕ,
Сарă кунсем таврăнасса
Манса кайма хушмарĕ.

Бронзăпала эрешленĕ
Тăрантаса лартрĕ те,
Вĕçтертĕмĕр Эрехе —
Кĕнеке пуххин çуртне.

Çырма пĕлен ăсчахсем
Çемçе тăма чĕреççĕ,



Хавхаланса, тăрăшса,
Пурте тимлĕ ĕçлеççĕ:

Тăмран чуста çăраççĕ,
Лапташкасем[1] тăваççĕ,
Кĕнекине пиçсе тухма
Кăмакана хываççĕ.

Вĕрӳ-суру кĕллине,
Юмах, юрă сăввине
Кĕнекене пухаççĕ,
Хуралласа упраççĕ.

* * *

Саркун — ăста çыравçă:
Çăлтăрсемпе сĕмленет,
Юмăç чĕлхине тĕпчет,
Ăслă пулма вĕрентет.

«Кам вăрçăпа тапăнать —
Явапне хăех тытать.
Кам çынна усал тăвать —
Усал хăйнех тĕп тăвать».

«Эпĕ вăрçа тухса кайнă
Тăшман вăйне аркатма,
Тăшман пире тапăннăшăн,
Çаратнăшăн тавăрма».

Мăнукĕсем валли çакна
Аслашшĕпе асламăшсем

[1] Лапташка — шумерсен çырулăх паллисем, кĕнекесем, тăмран тунă лапташкасем çинче упранса юлнă.

Тватă пин çул каялла мар,
Ĕнер çырса хунă пек.

Халăх йăли-йĕрки майне
Пире валли пухнă пек,
Кĕнекине алла тытса
Вуласса ĕненнĕ пек...

Саркун патша пуянлăхĕ —
Эреш-мереш палăксем:
Тискер кайăк, вĕçен кайăк,
Пирĕштисем, турăшсем.

Илĕм-тилĕм керменсене
Епле çӳллĕ çĕкленĕ,
Юписене, стенисене,
Чĕркелесе тĕрленĕ.

Ӳкерчĕксем шăтăкласа
Тĕрлĕ тĕспе сăрланă,
Пĕтĕм тĕнче ăмсанмалăх
Кĕтрет[1] лартса хăварнă.

Авал чăваш кĕнекине
Хĕрлĕ çулăм хыпнă пуль,
Тăм кĕнеке ванчăкĕсем
Кĕл айĕнче юлнă пуль.

Çунса кайнă керменсене
Çавра çилсем тустарнă,
Хăйăр, тусан, тăпра сапса
Тултарнă та пытарнă.

---

[1] Кĕтрет — тĕлĕнтермĕш.

Асамлӑ мул, хаклӑ тупра
Ҫӗр айӗнче выртать пуль,
Мӑнукӗсем пырас пулсан
Яр-р! уҫӑлса каять пуль.

Патша сумӗ — яваплӑ сум:
Халӑх ӗҫне пӗлмелле,
Кӳршӗсемпе туслӑ пулма
Хӑна-вӗрле чӗнмелле.

Усламҫӑ та пулмалла,
Сыхлавҫӑ та пулмалла,
Саккунсем те ҫырмалла —
Тӑнӑҫ пурнӑҫ тумалла.

Пуян пулнӑ, чаплӑ пулнӑ —
Веҫ арканнӑ, мӗн ҫитмен?
Сӗре кӗвӗҫ пулнӑ теҫҫӗ,
Апла пулсан чап ҫитмен?

Апла хура ӑмсанупа
Пӗрне-пӗри ҫаратнӑ,
Пӗр-пӗринпе тӳпелешсе
Тӑванлӑхне ҫухатнӑ.

Тӑванлӑхне ҫухатнипе
Тӑшман килсе аркатнӑ,
Тыткӑнланӑ, сутса янӑ,
Тӗнче тӑрӑх салатнӑ.

Тарҫӑ пулса, тар юхтарса
Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленӗ,
Такам тарҫи пулнипеле
Хӑйӗн ятне ҫӗтернӗ...

Ирĕк илсе мăнаçланма —
Пăхаттирсем тупăннă,
Çĕнĕ çĕрте çĕнĕ вăйпа
Пурнăç тума пуçăннă.

Этемлĕхе çутă тĕнче
Темĕн те пĕр кăтартнă,
Йывăр, çăмăл, пархатарлă
Пулăмсене пăлхатнă...

Хаклă тăван кĕрекинчен
Тав сăмахĕ калатăп,
Чун ыратса кайнипеле
Ĕсĕклесе яратăп.

— Сĕм-сĕм авал эсир Саркун
Çĕршывĕнче пурăннă.
Кайран тĕнче анлăхĕнчи
Атăл çĕрне йышăннă.

Атăл çĕрне куç хывиччен
Ăçта кăна çитмерĕр,
Атăл шывне пуç тайиччен
Мĕскер кăна тӳсмерĕр.

Пĕрне-пĕри пулăшмасан
Туслăх туйăмĕ сӳнет.
Тупăнакан кăлтăксене
Пĕрлĕх тытăмĕ çĕнет.

Ан эрленччĕ, саркайăкăм,
Хурланнипе мĕн пулать?
Иртен-каян пурăнăçран
Илемлĕ ĕç — çав юлать. —

Саркун патши çак шухăша
Лăпкă саспа каларĕ.
Çавăрăнса кайнă пуçăм
Атăл шывĕн шавларĕ.

* * *

Тĕлĕнтермĕш тĕлĕк мана,
Тен, чăннинех кăтартрĕ?
Тĕксĕмленнĕ кăмăлăма
Ĕмĕт шевли çутатрĕ.

Ырă Саркун патшамăра
Чăваш лайăх астăвать,
Халапсенче, юмахсенче
Сарă куншăн тав тăвать.

Ваттин — халап ярасси,
Шахвăртса ăс парасси.
Вĕттин — куçне чарлаттарса
Чăнк! тăнласа ларасси.

Сăмахлама сăмах пур,
Хапăл тума хăна пур.
Халап ярса юмахлама
Халăх ăрăскалĕ пур.

# Тупмалли

ТАВҪӐРУЛЛӐ КӐТРАК. *Халап* . . . . 3

ЧӖКЕҪ ЙӐВИ. *Чӑн пулни* . . . . . . . 17

ТӖЛӖНТЕРМӖШ ТӖЛӖК. *Халап* . . . . 23

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув) 6—4
А 90

Литературно-художественное издание

Для детей среднего школьного возраста

**Светлана Азамат**
**(Смирнова Светлана Васильевна)**

# ТĔЛĔНТЕРМĔШ ТĔЛĔК
# ЧУДО-СОН

**Сказы и быль**

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Васильева*
Художник *С.А. Бритвина*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Е.Ю. Ермолаева*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Изд лиц. № 06317 от 26.11.01.
Подписано к печати 15.05.06. Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ.л. 2,34. Учетно-изд. л. 1,29. Тираж 2000 экз. Заказ № К-6239. Изд № 28.

ГУП «Чувашское книжное издательство», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

© Асамат С.В., 2006
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2006

ISBN 5-7670-1441-8

16 50

